Ĕçпе тивĕçтерессин ыйтăвĕсемпе

Ĕçсĕррисене – професси

Граждансене çĕнĕ профессисене алла илме май туса пани ĕçсĕрлĕх ыйтăвне татса парассипе пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Кун пирки республика Президенчĕ Н.В. Федоров ЧР Патшалăх Канашне янă хăйĕн Çырăвĕнче те уйрăммăн асăнчĕ. Кризис вăхăчĕ пулсан та, ĕçсĕррисене çĕнĕ профессисене вĕрентме, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелеме, çынсене ĕç тупса пама, харпăр хăйĕн бизнесне йĕркелеме республикăра сахал мар ĕç тăваççĕ. Районта вара ку тĕлĕшпе лару-тăру мĕнле-ха? Çавăн пирки тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăмăр эпир районти ĕçпе тивĕçтерекен центрăн ертсе пыракан специалистне Надежда Владиславовна ВОЛКОВАНА:

– Эпир те ку енĕпе хамăр умри задачăсене аван курса тăратпăр. Уйрăмах çынсене çĕнĕ профессисене вĕрентессин майĕпе анлăн усă курма тăрăшатпăр. Çитменнине ĕçсĕррисен пирĕн центр урлă укçа-тенкĕ тĕлĕшĕпе тăкакланмасăрах кирлĕ професси илме май пур.

Професси пĕлĕвне илме чи малтанах уйрăмах социаллă хăтлăхсĕр юлнă ĕçсĕр граждансене вĕренме яма тăрăшатпăр. Кусем вĕсем çамрăксем, инвалидсем, çемьере çул çитмен ачасем пур хĕрарăмсем, нумай вăхăт ĕçе вырнаçайманнисем.

Ĕçсĕррисене професси илме майсем туса панă чухне чи малтанах çакăн çине тимлĕх уйăратпăр:

– ĕçсĕр çыннăн кирлĕ професси квалификацийĕ çуккипе вăл ĕçе вырнаçма пултарайманнине;

– çын хăйĕн профессийĕпе кирлĕ ĕç вырăнĕ шыраса тупайман пирки унăн профессие улăштарма тивнине;

– çын малашне хăйĕн унченхи профессийĕпе е специальноçĕпе ĕçлеме пултарайманнине.

Çӳлте асăннă сăлтавсене пула çын ĕçе вырнаçаймасть пулсан, ăна вĕренме сĕнеççĕ. Ĕçпе тивĕçтерекен центрта професси суйласа илессипе тест, профконсультантпа калаçу ирттеретпĕр. Çакă çын хăш профессипе ĕçлеме юрăхлăрах пулнине палăртма май парать.

Ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă çакна тума пулать:

– енчен те сирĕн (сăмахран, халĕ кăна шкул пĕтернĕ çамрăксен) професси е специальность пачах çук пулсан, вĕренме кайма;

– ĕç рынокĕнче кирлĕ шутланакан çĕнĕ профессие вĕренме;

– теори пĕлĕвĕсене, пултараслăха практикăра çирĕплетме стажировкăра пулма.

Професси илекенсен Шупашкарти аслă, вăтам тата пуçламăш професси вĕрентĕвĕн вĕренӳ заведенийĕсенче, хушма вĕренӳ учрежденийĕсенче вĕренмелле. Профессие вĕренесси 6 уйăхран иртмелле мар. Профессие вĕренме янă чухне медицина тĕрĕслевĕ тӳлевсĕр. Вĕреннĕ чухне стипенди тӳлеççĕ, çул укçи тӳлемелле мар.

Ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă ĕçсĕррисем 47 профессипе специальноç илме пултараççĕ. Вăл шутра ПЭВМ операторĕ, ертӳçĕ секретарĕ, суту-илӳ енĕпе ĕçлекен менеджер, парикмахер, массажист, маникюр, повар-кондитер, сутуçă-кассир, 1 С: Бухгалтерия, 1 С: Предприятие, 1 С: Торговля, персонал енĕпе ĕçлекен менеджер, çĕвĕç, токарь, электрооборудованисене юсакан тата пăхса тăракан электромонтер, автомеханик, отделка тата строительство ĕçĕсен маçтăрĕ, каменщик, электрогазосварщик, «В» тата «С» категорисемлĕ водитель, водительсене «В» категорирен «С» категорие вĕрентесси, тракторист-машинист, котельнăй операторĕ т. ыт. те.

Кăçал районти ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă пĕтĕмпе 65 çын профессие вĕренчĕ, çĕнĕ професси илчĕ е квалификацине ӳстерчĕ. Профессисемпе специальноçсене асăнас пулсан, электрогазосварщика, 1 С: Предприятие, «Д» категориллĕ водителе, парикмахера, сутуçă-кассира, столяр-платника, отделка тата строительство ĕçĕсен маçтăрне, котельнăй операторне, ПЭВМ операторне, газ оборудованине юсакан тата пăхса тăракан слесаре, «С» категориллĕ водителе, маникюра, уйрăм хуралçăна, башньăллă кран машинистне, секретарь-референта, тракторист-машиниста, «В» тата «С» категорисемлĕ водителе вĕреннисем пур.

Професси пĕлĕвĕ парас тĕлĕшпе ĕçсĕр граждансене стажировкăна яни те пĕлтерĕшлĕ самант пулса тăрать. Çапла майпа вĕсем практикăра хăйсен теори пĕлĕвне çирĕплетейреççĕ, професси тивĕçĕсене лайăхрах пурнăçлама пултараççĕ. Стажировка – çамрăк специалистсене ĕçе вырнаçмалли лайăх мел, организацисен вара перспективлă кадрсем тупма май пур.

Стажировка ирттерме 34 предприятипе тата организацип пĕтĕмпе 67 килĕшӳ тунă. Ку шутра Чапаев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕ, районти «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» ООО, районти тĕп больница, районти 2-мĕш номерлĕ больница, Çатракасси, Чуманкасси, Оринин, Турай, Ярапайкасси, Мăн Сĕнтĕр, Юнкă, Москакасси, Йӳçкасси, Муркаш, Калайкасси, Сосновка, Тойкилтĕ, Шетмĕпуç шкулĕсем, Муркаш лицейĕ, «Муркашри автомобильсен техника сервисĕ» ООО, Ярославка, Чуманкасси, Хорнуй, Москакасси, Çатракасси, Оринин, Юнкă, Катькас, Ярапайкасси, Ильинка ял тăрăхĕсен администрацийĕсем. Çак предприятисемпе организацисене пĕтĕмпе 76 çынна ĕçлеме янă.

Тухтăр канашĕ

Сивĕре – ăшă пылак чей

Сывлăшри температура пĕчĕк тăни «чăн-чăн хĕл пурри çинчен ан манăр» тесе каланăнах туйăнать. Ун пирки манмастпăр-ха, анчах та çак сивĕре ал-урасене, питпе сăмсана тăм илесрен е илтерсен мĕн туманлине манман-и-ха?

Муркашри тĕп больницăри врач-травматолог, ортопед Анатолий Петрович АФАНАСЬЕВ панă усăллă сĕнӳсем вулакансемшĕн питĕ вырăнлă пуласса шанатпăр:

– Ӳтĕн çиелти сийне е тата тарăнрах шăнтнă пулсан, малтанах ăшă пӳлĕме кĕме васкăр. Шăнтнă вырăнсене урамра та, пĕр-пĕр пӳлĕме кĕрсен те юрпа сăтăрма юрамасть. Çав тĕле вĕри тата сивĕ япаласем те хумалла мар. Шăнтнă алăсене тӳрех вĕри батарейăсем çумне тытмалла маррине те пĕлмелле. Ку татах та сиен кӳрет кăна. Ăшă пылак чей ĕçмелле, пĕр стакан кăна мар, темиçе ĕçни те аван.

Тарăннăн шăннă ӳт шуралнă, е тата ăна кăвакрах тĕс çапнă пулсан, тӳрех ăшă пӳлĕме кĕме тăхтамалла. Унта кĕртиччен малтан çынна ăшă утиялпа пĕркентермелле. Вăл хăйне хăй ăшăнма пуçлать. Кайран вара кĕмелле.

Шăнтнă вырăнсене ятарлă кремсемпе, сăмахран, облепиха çăвĕ, сĕрмелле. Аптекăсенче вĕсене сутаççĕ. Е тата сивĕ чух урама тухас умĕн ятарлă кремсем сĕрни те пулăшать.

Енчен те эсир урамра шăнса кӳтнĕ çын выртнине курсан, васкавлă медицина пулăшăвне чĕнмелле. Машина çитиччен вара май пулсан çӳлерех асăннă сĕнӳсене шута илсе пулăшу пама та юрать.

Ӳте шăнтнă пулсан тӳрех мунчана кайма та юрамасть!

Сивĕ çанталăк тăнă вăхăтра калпаксăр, тутăрсăр çӳремелле мар, лайăх апатланмалла, витаминсем йышăнмалла. Сивĕ çанталăкра пирус туртни нимĕн чухлĕ те пулăшмасть, юн çаврăнăшĕшĕн сиенлĕ çеç. Нумайрах хусканусем тума тăрăшмалла.

Çанталăк ыйтнă пек тумланмалла. Урана çăматă тăхăнмалла – илемлĕ те, ăшă та. Тăвăр атă-пушмак ку çанталăкра айккинче тăтăр.

Çак кунсенче больницăна ал-урисене шăнтса пулăшу ыйтма килнисем хушшинче çул çитмен çамрăк та пулчĕ. Вăл конькипе ярăнса ура пӳрнисене шăнтнă. Çавăнпа конькипе ярăнакансен 2-3 хут çăм чăлха тăхăнса, коньки размерне те çавăн чухлех пысăкраххине тăхăнмалла. Вара сивĕре пăр çине тухма пулать.

Сивĕре тĕрлĕ диетăна тытассинчен хăтăлмалла, ун вырăнне лайăх апатланмалла. Ку вăл кунне пĕрре вĕри апат çинине пĕлтермест – кунĕпех апатлану рационĕ пуян пулмалла. Таçта инçе çула тухакансен, вĕсем, сăмахран, типĕ тытаççĕ пулсан, хăйсен сывлăхĕ пирки шутласа апата тутлăхлăрах тума тăрăшмалла. Çуран утнă чух вăхăтран-вăхăта , май пулсан, лавккасене е ытти çуртсене кĕрекĕре тухмалла.

Ӳт-пĕве тăтăшах тĕреклетекенсене вара сивĕ çанталăк та хăрушă мар. Апла пирĕн пурин те çакăн патне туртăнмалла.

Сывлăхлă апатлану

Мĕнле какай çимелле?

Сывă пурнăç йĕрки тетпĕр те, нумай чухне вара вăл тĕрĕс апатланнинчен килнине манатпăр. Акă хĕллехи кунсенче нумайăшĕ какай ытларах çиет. Аш-какайран хатĕрленĕ апат-çимĕç пирки вара пурте пĕлсех каймастпăр-ха, сăмахран, çуллă мар хĕрлĕ какай çиме тăрăшмаллине. Кайăк-кĕшĕк ашне вара тирĕсĕр çини çу калăпăшне чакарать.

Эрнере икĕ хутчен те пулин пулă çини сывлăхшăн усăллă. Паллах, тин тытнă пулăна пĕçерсе çинине нимĕн те çитмест. Шурă ашлă пулăра çу сахалрах пулнине те манмалла мар. Сардина, лосось тата скумбри çуллăрах шутланаççĕ, анчах та вĕсен çăвĕ юн тымарĕсене атеросклероз чирĕнчен сыхлама пулăшать. Çу ăшĕнче консервланă пулă ашĕ тата ытти аш-какай продукчĕсем пысăк калориллĕ, çавăнпа та апатлану рационне вĕсене сайрарах кĕртме тăрăшмалла.

Яшкасем, салатсем, запеканкăсемпе винегрет ăшне фасоль, пăрça, чечевица хушмалла.

Пăрça йышши культурăсене апатланăва кĕртни юнри глюкозăна кирлĕ шайра тытса тăма пулăшать.

Сояран хатĕрленĕ продуктсенче çу сахалрах, хăш-пĕр апатсенче вĕсем какая ылмаштарма та пултараççĕ.

Аш кукли, булка ăшĕнчи сосиска... Час-часах çиме юрататпăр эпир вĕсене. Анчах та вĕсенче çу калăпăшĕ нумай. Çавăнпа та май пур чухне вĕсен вырăнне какайран хатĕрленĕ урăх апат-çимĕç суйласа илме тăрăшăр.

Аш-какай тирпейлекен комбинатсенче хатĕрленĕ çурма-фабрикатсем калори енĕпе хамăр туса илекен какайран чылай пуянни пирки те манмалла мар. Сосискăсем, сарделькăсем, пур тĕрлĕ кăлпасси ăшне çу тата ытти тĕрлĕ пысăк калориллĕ хутăшсем яраççĕ. Вĕсем вара шăпах пирĕн кĕлеткене килосемпе пуянлатаççĕ тата юнри сахăр шайне хăпартса яраççĕ. Çавăнпа та хăвăрăн сывлăхпа тата кĕлетке формипе кăмăллă мар пулсан, сĕтел çинче «ревизи» ирттерме те юрать.

Т. ШАРИКОВА, врач-эндокринолог.

Ятлă çынна ял савать

Хисеплĕ тухтăр

Тухтăр. Епле хисеплĕ те йывăр вăл тухтăр ĕçĕ. Çĕр çинчи мĕн чухлĕ çын вĕсене ырăпа асăнать, вăрăм ĕмĕр сунать.

Ахальтен мар ĕнтĕ çак ĕçе суйласа илнĕ те Калерия Васильевна Леонтьева. Ача чухнех вăл тантăшĕсемпе «тухтăрла» выляма юратнă. Шкул пĕтернĕ хыççăн вара медицина училищине çул тытнă. Вĕренсе тухнă çамрăк специалист Турай больницинче акушерка ĕçне тытăнать, мĕн чухлĕ хĕрарăм пурнăçне çăлса хăварман пулĕ вăл. Сивви-ăшшине, çил-тăманне пăхмасăр ĕçе васкана. Тивĕçлĕ канăва тухнă пулсан та, ăна таврари çынсем манмаççĕ, ырăпа çеç асăнаççĕ.

Пĕр хушă вăл Шаптакри фельдшерпа акушер пунктĕнче те тăрăшать, пĕтĕм вăй-халне парса ĕçлет. Канăç çук çав тухтăрăн: çĕрле те çула тухмалла, чирлĕ çынна вăхăтра пулăшу памалла.

Пурне те пулăшать, кирлĕ сĕнӳсем парать акушерка. Фельдшер пунктне А. Потрякова çамрăк специалиста ĕçлеме яраççĕ. Ăна та Калерия Васильевна хăйĕн пуян опычĕпе паллаштарать. Çакăн пек пултаруллă медицина ĕçченĕ вĕрентсе пынипе çамрăк специалист та ун пекех тăрăшуллă пулать.

Калерия Васильевна вара тивĕçлĕ канура та яланах çынсене пулăшма хатĕр.

М. НИКОЛАЕВА, Тойкилтĕ библиотека ертӳçи.

Шухăш

Ыррипе тĕрĕс усă курма пĕлместпĕр-ха

Юлашки çулсенче Муркаш урамĕсенче транспорт йышлăрах та йышлăрах çӳреме пуçларĕ. Машинăллă çынсем нумай. Çакна уйрăмах ирсерен, пурте ĕçе васканă вăхăтра, сăнама май килет.

Арçын е хĕрарăм машина туянма пултарать пулсан аван: ку – çыннăн пурнăç условийĕсем япăх маррине кăтартакан пулăм. Сăмахран, ашшĕ-амăшĕ кунсерен ачисене шкула машинăпа леçнине маларах Европăри тата Анăçри пурнăçа сăнласа паракан киносенче çеç курнă вĕт-ха. Халĕ вара ку пирĕн патрах. Инçе каймалла та мар.

Акă Муркаш шкулĕ умне те кашни ирех пĕрин хыççăн тепри чаплăран та чаплă машинăсем пырса чарăнаççĕ – ашшĕ-амăшĕ ачисене шкула леçет. Пурнăçри ырă пулăм: эпир те анăçрисенчен кая мар. Анчах та çакă тата çакна евĕр ытти ырлăхсем пирĕн вăрах вăхăт хушши çирĕп йĕрке пулнă çĕршыва тăруккăнрах килсе лекрĕç курăнать. Çĕннине, лайăххине хапăлласах йышăнатпăр-ха, анчах та тĕрĕс, йĕркеллĕ усă курма пĕлместпĕр. Хамăрăн ăс-тăн культурине çакнашкал пулăмсемпе ниепле те шайлаштарсах çитерейместпĕр.

Маларах асăннă «ырă пулăм» патнех таврăнар. Шкул территорине кĕмелли хапха умĕнче чарăнакан машинăсенчен тухса ачасем урока васкаççĕ. Вĕсен çул урлă асăрханса каçасси пирки шутламалла та мар. Машинăна асфальт çулăн тепĕр енче чаракансем те чылайăн (ĕçе çӳремелли «çулĕ» çаплах выртнипе). Шăпах çак лару-тăрура, çул урлă каçнă чух, ачасен те, вĕсене алăк уçса кăларса янă хыççăн машинăра ларса юлакан! ашшĕ-амăшĕн те питĕ тимлĕ пулмалла. Ирпе автобуссем те, ытти машинăсем те чылай çӳреççĕ çак вырăнпа...

Акă пĕр çăмăл машина чарăнчĕ. Çав самантрах асфальт çул енчи хыçалти алăкне уçса ача тухрĕ те ашшĕ çине кăмăллăн пăхнипе пĕрлех çул урлă каçма тытăнчĕ. Çул тăрăх тепĕр машина килнине вăл курмасть те – унăн куç умĕнче те пĕр объект кăна – шкул. Юрать çак вăхăтра асфальтпа пыракан машина водителĕ, шкул патĕнчен вăраххăн иртнĕрен, тормоз педалĕ çине çийĕнчех пусрĕ. Ача çул урлă чиперех каçса кайрĕ. Машинăра ларакан ашшĕ нимĕн те пулман пекех малалла кайма хатĕрленчĕ. Ку ашшĕ кашни кунах ачине çапла леçет-ши ĕнтĕ, е ытла та лăпкă кăмăллăскер-ши, тесе тĕлĕнтĕм хам ăшра.

Шутласа кăларни мар, чăн пулниех ку. Пĕрре мар курнă Муркаш шкулĕ умĕнче çапла пулнине. Ахăртнех, хăйсене меллĕрех пултăр тесе шутлаççĕ пулĕ хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăха пăсса, ачисен пурнăçне хăрушлăх умне кăларса тăратса.

Районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ 11 уйăхра пирĕн район территорийĕнче çул урлă палăртман вырăнпа каçнипе 12 инкек пулнă. Вĕсенче 8 çын аманнă, 5-шĕ вара ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă. Ку инкексенче малтанах çуран çӳрекенсем айăплă. Анчах та ятарлă вырăнпа каçнă чухне те çынна таптанă пĕр тĕслĕх пулнă. Акă декабрĕн 11-мĕшĕнче те патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекци уйрăмĕн инспекторĕсем «Пешеход» рейд ирттерчĕç. Çул урлă каçмалли ятарлă вырăнсенче йĕркене пăснине те, каçма юраман вырăнта çул урлă çӳренине те пĕрре мар тупса палăртрĕç.

Н. НИКОЛАЕВА.

ГИБДД пĕлтерет

Рейдсен йĕрĕсемпе

Çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăх правилисене çуран çӳрекенсем те, водительсем те пур чухне пăхăнмаççĕ. Акă каçалхи 11 уйăхра çак правилăсене пăснăшăн районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем çырнă протоколсемпе килĕшӳллĕн пĕтĕмĕшле 694410 тенкĕлĕх штраф панă. Çак суммăн 90,75 процентне (ку 630203 тенкĕпе танлашать) шыраса илнĕ ĕнтĕ. Каламалла, район кăтартăвĕ республикăри вăтам кăтартуран (79,4 процент) чылай пысăкрах. Çав вăхăтрах Раççей Федерацийĕн Административлă право нормисене пăснин кодексĕн 32.2 статйинче кăтартнă требование пурнăçа кĕртсе пырасси кирлĕ шайра мар-ха. Çакна шута илсе декабрĕн 16 мĕшĕнче суд приставĕсемпе пĕрле район территорийĕнче «Парăмçă» рейд ирттертĕмĕр. Рейдра штрафсене вăхăтра тӳлеменнипе татах икĕ пртокол çырма тиврĕ. Çав парăмçăсен халĕ укçана малтан палăртнинчен икĕ хут нумайрах кăларса хума тивĕ.

Рейдсем пирки калас пулсан, вĕсем сахал мар иртеççĕ районта. Акă кĕçнерни кун, декабрĕн 17-мĕшĕнче, «Автобус» рейд та иртрĕ. Çак кун пассажирсене турттаракан транспорта уйрăмах тимлĕ тĕрĕслерĕмĕр. Ачасене турттаракан шкул автобусĕсене тĕрĕсленипе çитменлĕхсем тупса палăртман. Ку савăнтарать те. Пассажирсем турттаракан транспорта тĕрĕслесе вара 2 протокол çырма тиврĕ.

А. ЩЕРБАКОВ, районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн уйрăмĕн инспекторĕ.